К84.89(=Чув)
К43
Ч-47527

Геннадий Кириллов



# ПУШМАК ТАСАТАКАН ВИÇĔ АРÇЫН АЧА

Национальная библиотека ЧР
4-047527

К84.8(2=Чув)
ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
К43

**Геннадий Кириллов**

# ПУШМАК ТАСАТАКАН ВИҪĔ АРҪЫН АЧА

ПЬЕСА

**Ф. Бабий хайлавне тĕпе хурса ҫырнă**



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2014

УДК 821.512.111-93
ББК 84(2Рос=Чув)6-4
К 43

*Кӗнеке ал ҫырӑвӗ ачасемпе ҫамрӑксем валли чӑвашла ҫырнӑ произведенисен 2013 ҫулхи конкурсӗнче ҫӗнтернӗ. Конкурса Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗ 2011 ҫулхи июнӗн 16-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленипе килӗшӳллӗн йӗркеленӗ.*

**Кириллов Г.В.**
К 43 Пушмак тасатакан виҫӗ арҫын ача: пьеса / Г.В. Кириллов. — Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2014. — 48 с.
ISBN 978-5-7670-2257-1

Кӗнекери сӑнарсем — пушмак тасатакан виҫӗ арҫын ача. Укҫа ӗҫлесе илес, хӑйсене тата ҫемйисене тӑрантарас тесе самаях тар тӑкма тивет вӗсен. Тӗрлӗ пӑтӑрмаха ҫакланаҫҫӗ ҫамрӑксем. Ҫынсен ӑнланманлӑхӗпе тӳрккеслӗхӗ кӑмӑла хуҫать. Анчах пурпӗр пусӗсене усмаҫҫӗ туссем.

Ытлӑ-ҫитлӗ те телейлӗ пурнӑҫ пирки ӗмӗтленнипех тепӗр чухне йӑнӑш утӑмсем тӑваҫҫӗ ачасем. Ӗҫченскерсене, ырӑ чунлӑскерсене ҫаксемшӗн те каҫаратӑн, кашниншӗн пӑшӑрханатӑн.

Ч-47527

УДК 821.512.111-93
ББК 84(2Рос=Чув)6-4

Национальная библиотека Чувашской Республики

© Кириллов Г.В., 2014
© Чӑваш кӗнеке издательстви, 2014

ISBN 978-5-7670-2257-1

Проверено 8 СЕН 2017

## ВЫЛЯКАНСЕМ

Робин — арçын ача.
Жеан
Бирон > унӑн тусӗсем.
Гуарди (вӑлах Старик) — Робин ашшӗ.
Эдмон.
Поль.
Жорж.
Эмиль — чаплӑ машина хуçи.
Дама (Люси).
Çамрӑк çын (Жюль).
1-мӗш сутуçӑ.
2-мӗш сутуçӑ.
Арçынсем. Кӳршӗсем. Маска тӑхӑннисем.
Утакан урасем (пысӑккисем, пӗчӗккисем).
Щеткӑсем (пӗчӗккисем, пысӑккисем).

## ПӖРРЕМӖШ ПАЙӖ

Сцена умӗ.

Çутӑ майӗпен çуталать, урасем пӗр чарӑнми утаççӗ. Кашниех тӗрлӗрен — калӑпӑшӗпе те, тӗсӗпе те. Пурин те атӑ-пушмакӗ çап-çутӑ та тап-таса. Сцена çинчи çутӑ хальлӗхе вӗсем çине кӑшт çеç ӳкет-ха. Апла пулин те пӗчӗкçӗ щеткӑсем хыпкаланни лайӑхах курӑнать.

1-мӗш щетка. Мсье, тасаттарма ирӗк парсам!..
2-мӗш щетка. Мсье, тасаттар, тархасшӑн...

Урасем пӗр чарӑнми утаççӗ.

3-мӗш щетка. Мсье, тархасшӑн...

Урасем чарӑнмаççӗ, çаплах утаççӗ, унтан тухса каяççӗ. Щеткӑсем вӗсем хыççӑн чупкаласа курӑнми пулаççӗ. Çутӑ сӳнет.

## Пĕрремĕш курăну

Çуталсан — хулан пĕр кĕтесĕ. Урамăн пĕр енче — хăна çурчĕ, тепĕр енче, çав çурта хирĕçлерех — темиçе лавкка. Ир. Аякра пушмак тасатса çӳрекен ача-пăча сасси илтĕнет. Сутуçăсем шăв-шава илтсе лавкка чӳречисенчен пуçĕсене кăлараççĕ.

1-мĕш сутуçă. Манăн лавккара мĕн чухлĕ илемлĕ сувенир! Ĕлĕкхи африканецсем тунинчен пĕртте начар мар вĕсем.

2-мĕш сутуçă. Куратăп-ха, куратăп! Анчах çав çапкаланчăксене пула эсĕ пĕр таварна та сутаймăн!

1-мĕш сутуçă. Каллех иртен-çӳрене хăйсен йĕрĕнчĕк сассисемпе кунтан сивĕтсе пĕтереççĕ.

2-мĕш сутуçă. Паллах, хăратаççĕ те...

1-мĕш сутуçă *(кулянарах)*. Чăнах! Паян та вара нимĕн те сутасси пулмасть-ши?..

2-мĕш сутуçă. Курăн ак! Каларĕ тейĕн...

Сутуçăсем чӳречисене хупаççĕ. Хăна çуртĕнчен лайăх тумланнă, анчах хăйĕн туфлине тасатма маннă Эдмон тухать, самантлăха чарăнать. Ун умне виçĕ енчен виçĕ арçын ача сиксе тухать.

Жеан. Патрон! Хăвăн пушмакна тасатма ирĕк парсам, тархасшăн!

Робин. Нивушлĕ сана, патрон, хулара çакăн пек туфлипе çӳреме килĕшет?

Бирон. Тасатман пушмаку санăн çи-пуçна илемсĕрлетет.

Эдмон кулса илет. Арçын ачасем шăпланаççĕ, пĕр хушă ун çине пăхса тăраççĕ.

Жеан. Тасатма ирĕк парсам, мсье...

Робин. Патрон, тасатма çеç...

Бирон. Мана ирĕк пар — хамах тасатам!

Робин. Çук. Эпĕ тасатсассăн унăн туфлине такам та пăхса ытараймĕ! Ĕненместĕн-и, патрон?


LION NOIR
A LA CIRE
SUZE
HOTEL

Жеан. Ан янра-ха эсӗ! Пушмак тасатма мана ҫеҫ хушма пултаратӑн!

Робин. Ку вӑл — ман патрон! Шеф, кала-ха, эпӗ вӗт сан туфлине тасатаканни!

Эдмон. Тӗрӗс. Пурне те черетпе тасаттаратӑп. Паян вара... чӑннипех, санӑн черет.

Робин. Манӑн-и? Патрон, эсӗ ҫакна суймасӑр калатӑн-и?

Эдмон. Чӑнласах. Паян эсӗ. Кала-ха, ачамккӑ, сана мӗнле чӗнеҫҫӗ?

Робин. Эпӗ Робин ятлӑ... Ку — Жеан. Ак ку вара — Бирон...

Эдмон. Паян, Робин, эсӗ тасататӑн. Ыран...

Жеан. Эпӗ, Жеан.

Эдмон. Ҫапла. Ыран — Жеан. Тепӗр кун — Бирон.

Робин. Унтан каллех эпӗ-и, Робин-и?

Эдмон. Ҫапла. Эсӗ... Ну, калаҫса татӑлтӑмӑр-и? Кашни кун улшӑнса тасататӑр.

Робин *(тусӗсене)*. Анчах, чим-ха! Улталамасӑр! Ним улталамасӑр! Калаҫса татӑлтӑмӑр-и?

Эдмон. Мӗн эсӗ, Робин? Никам та улталамӗ. Ну, халӗваскарах тасатсам. Ахаль пӑхса тӑма вӑхӑт ҫук. Ман каймалла.

Жеанпа Бирон пушмак тасаттаракансене шырама каяҫҫӗ. Робин ӗҫе пикенет. Малтанах вӑл туфли ҫинчи тусана шӑлать. Ун алли хаваслӑ юрӑ ҫеммипе ҫӑмӑллӑн вылянать. Ҫав кӗвве вӑл хӑй шӑхӑркалать. Эдмон сехечӗ ҫине: «Мала кайнӑ-ши, кая юлнӑ-ши?» — тенӗн пӑхса илнӗ ҫӗре Робин тасатса та пӗтерет.

Эдмон *(хӑй тӗллӗн)*. Миҫе мӑшӑр атӑ-пушмак тасатман пулӗ Робин хӑйӗн ҫамрӑк ӗмӗрӗнче? Пин мӑшӑра, тен, ҫитеймен пулӗ-ха, мӗншӗн тесен вӑл ҫулӗпе ҫав тери ҫамрӑк... Миҫе ҫулта-ши вӑл? *(Робин еннелле.)* Робин, эсӗ шкула ҫӳретӗн-и?

Робин. Ҫук, патрон.

Эдмон. Мĕншĕн?

Робин. Мĕншĕнне калама питĕ йывăр, патрон.

Эдмон. Питĕ йывăр тетĕн?

Робин. Йывăр çав... Тĕрĕссипе, шкулта вĕренме йывăр, патрон... Тата эпĕ пĕчĕккĕ те мар.

Эдмон. Пысăках та мар... Миçере эсĕ?

Робин. Ох, патрон, йывăр ыйту ку маншăн. *(Пушмака тасатса пĕтернĕ май ĕç хатĕрĕсене пуçтарать.)*

Эдмон. Робин, санăн аçу пур-и?

Робин. Кашни çыннăнах ашшĕ пур. Пирĕн килте: «Ашшĕсĕр ача пулмасть», — теççĕ.

Эдмон. Паллах. Ку тĕрĕс. Апла пулсан сан аçу пурха... Эпĕ, чăннипе, вăл халĕ те сывă-и тесшĕнччĕ.

Робин. Пурăнать, паллах, патрон.

Эдмон. Ĕçлет-и вăл?

Робин. Çук, патрон.

Эдмон. Мĕншĕн?

Робин. Мĕншĕн тесен эпĕ ĕçлетĕп, патрон...

Эдмон. Мĕнле-ха капла? Эсĕ ĕçлетĕн, аçу вара...

Ĕç хатĕрĕсене хăй ешчĕкне пуçтарса хунă Робин Эдмон çине пăхать те тӳрленсе тăрать. Эдмон çав самантра укçа кăларса ачан ал тупанĕ çине хурать.

Робин *(тĕлĕнсе пăхса)*. Господин, эсĕ урăх çĕршыв-ран килнĕскер-им?

Эдмон. Мĕншĕн апла шутлатăн?

Робин. Питĕ лайăх тӳленĕрен, патрон... Çавăнпа. Эсĕ мана халь питех те аван тӳлерĕн. Кун пек пулсан эпĕ сан пушмакна кашни кун тасатма хатĕр.

Эдмон. Çук, ĕнтĕ, Робин. Мĕн, паçăр çеç каласса тăлнине мантăн-им? Паян — эсĕ, ыран вара — санăн юлташусенчен пĕри.

Робин. Тĕрĕс, патрон. Эсĕ — лайăх çын. Сывă пул!

Эдмон. Ан васка-ха ун пекех, Робин. Эпĕ санран çакна ыйтасшăн...

Робин. Каласам, патрон.

Эдмон. Мĕншĕн эсĕ ĕçлетĕн, санăн аçу ĕçлемест?

Робин. Вăл вăйĕ çитнĕ таран тăрмашать-ха, патрон, кăштах ĕçлекелет...

Эдмон. Ав епле! Мĕн тăвать-ха вăл?

Робин. Кантра явать.

Эдмон. Кантра? Кантра кăна-и? Мĕншĕн? Малтан эсĕ вăл ĕçлемест тесе каларăн-çке.

Робин. Атте ниçта та ĕçе çӳреймест тесе каласшăнччĕ эпĕ. Килте çеç ĕçлекелени вăл чăн-чăн ĕç-и вара?

Эдмон. Мĕншĕн ĕçлеме çӳреймест?

Робин. Мĕншĕн тесен çӳреймест, патрон.

Эдмон. Çӳреймест-ха апла?

Робин. Çапла çав, патрон. Вăл суккăр. Эпĕ ăна: «Сана ыйткалама ямастăп, хам ĕçлеме каятăп!» — терĕм...

Эдмон. Ав епле... Ну, мĕнех... Робин, ăнăçу сунатăп сана. *(Каять.)*

Жеанпа Бирон чупса кĕреççĕ.

Робин. Пирĕн çинелле тинех ăнăçу хĕвелĕ çутатма пуçлĕ ĕнтĕ! Çапла, ăнăçрĕ паян пире, атьсем!

Жеан. Мĕн?..

Бирон. Мĕскер?..

Робин. Аха-а-а!.. Мĕскер-и? Мĕн-и? Ыран сирĕнтен пĕри çав господин пушмакне тасатнăшăн алă франк ĕçлесе илĕ! Вăл, суймасăр калатăп, лайăх тӳлет! Акă курăр!

Ачасен сăн-пичĕсем йăл кулăпа çуталаççĕ.

Бирон *(тем аса илсе)*. Вăт, айван, савăнать-ха! Ыранччен вăл, паллах, ку хулара пушмак тасатнăшăн никам та нихăçан та вунă франкран ытла тӳлеменнине пĕлĕ.

Робин. Пĕлĕ-и, çук-и — курăпăр!

Жеан. Курăпăр чăнах, Бирон.

Бирон. Курăпăр.



Çутă сӳнет.

Сцена умĕ.

Кăшт çуталсан каллех пысăк урасем утса иртеççĕ. Вĕсен хушшинче çаплах — виçĕ пĕчĕк щетка.

1-мĕш щетка. Тасаттар, мсье... тархасшăн.

2-мĕш щетка. Патрон, эпĕ сан пушмакна лайăх тасатăп...

3-мĕш щетка. Тасатма, мсье... Камăн пушмакне тасатмалла?

Щеткăсем каллех урасем хыççăн чупса тухса каяççĕ.

Çутă сӳнет.

## Иккĕмĕш курăну

Çуталнă май хăна çуртĕнчен пĕр çын тухать. Ку вăл — Эмиль. Ачасен умĕнчен мăн кăмăллăн, вĕсем çине пăхмасăр утса иртет. Урам урлă каçать те курăнми пулать. Машина сасси.

Жеан. Çав спорт машини унăн иккен-ха! Еплерех вĕçтерчĕ!

Бирон. Никама та палламасть, никама та курмасть...

Жеан. Аха! Хамăр курса савăнтăмăр ĕнтĕ! Хур аçи тейĕн хăйне... Тьфу!

Бирон. Енчен те унăн «шикарнăй» машина пур тăк хăйне çавăн пек тыткалама юрать-ши?

Жеан. Тен, вăл хăйне президент вырăннех хурать пулĕ...

Бирон. Вăл мĕнлерех уткаланине асăрхарăн-и эсĕ?

Жеан. Аха. Çын мар вăл, уткаласа çӳрекен катемпи. Эсĕ мĕн, çакна асăрхамарăн-им, Робин?

Робин. Суккăр мар... Куртăм-çке.

Бирон. Куртăн тăк ма нимĕн те каламастăн?

Робин. Эпĕ мĕн шутланине эсир хăвăрах йăлт каларăр.

Бирон. Суятăн. Эсĕ темĕн урăххи çинчен шутласа ларатăн пулас.

Жеан. Тӗрӗссине калатӑн, Бирон. Вӑл пирӗнтен темӗн пытарать.

Робин. Мӗн пытармалли пур-ха ман?.. Нимӗн те. Жеан, эпӗ нимӗн те пытармастӑп. Ну, куртӑм тейӗпӗр ҫав сынна... Ну, утса иртрӗ... Мӗнех вара? Хӑйне мӗнле килӗшет, ҫавӑн пек утать вӑл. Мана мӗн ӗҫ? Ун пирки эпӗ нимӗн те каламаннишӗн сире мӗн пулчӗ вара?

Бирон. Куратӑн-и, Жеан? Вӑл пӗрмай пирӗнпе чӗрре кӗрет. Кала-ха, эсӗ ҫакна асӑрханӑ-и?

Жеан. Тахҫанах. Мӗн тӗлӗнмелли? Пушмак тасаттаракансене те вунӑ франк вырӑнне алӑ франк тӳлекеннине тупма пултарать вӗт вӑл.

Робин. Вӑл господина ан тивӗр! Вӑл, ыттисенчен лайӑхрах тӳлекенни, манӑн та, сирӗн те. Эсӗ унӑн пушмакне ыран тасатӑн, тепӗр кун вара — Бирон! Мӗн уйрӑмлӑхӗ пултӑр кунта? Пурпӗр мӗн ӗҫлесе илнине касҫпа пӗр пек пайлатпӑр-ҫке.

Иртен-ҫӳрен ҫуккипе ачасем сулхӑна вырнаҫса ларассӗ. Робин та тротуар хӗррине ларать, пуҫӗ айне хӑйӗн ешчӗкне лартать те аллипе питне хупласа ыйха путать.

Ҫутӑ сӳнет.

## Виҫҫӗмӗш курӑну

### Робин тӗлӗкӗ

Ҫуталсан — Робинсен килӗнче. Гуарди, Робин ашшӗ, куракан пулнӑ. Ҫавӑнпа вӗсем патне кӳрши-арши пухӑннӑ. Пурте вӗсем — кулакан маскӑсемпе. Ташлаҫҫӗ. Вӗсемпе пӗрлех Эдмон та пур. Унӑн аллинче — сасӑ ҫырса илмелли аппарат. Вӑл Робин ашшӗн сассине ҫыртарасшӑн.

Эдмон. Нумай вӑхӑт тӗттӗмре пурӑннӑ хыҫҫӑн куракан пулнӑ ҫын хӑйне мӗнле туять халӗ?

1-мӗш маска. Ку вӑл — вӑрттӑнлӑх.

2-мӗш маска. Эпир хамӑр вӑрттӑнлӑха уҫмастпӑр.

1-мӗш маска. Тата, ҫитменнине, эсӗ унӑн сассине ҫырса илесшӗн.

Гуарди. Курмасӑр нумай пурӑнтӑм эпӗ. Паян акӑ тинех маншӑн ҫут тӗнче уҫӑлчӗ. Анчах та эсӗ темшӗн хӑвӑн ултавлӑ аппаратупа эпӗ мӗн каланине ҫырса илесшӗн. Ахалех тӑрӑшатӑн, хамӑн сассӑма сана памастӑп. Эсӗ мана ҫырса илсен эпӗ сассӑр тӑрса юлма пултаратӑп. Кала-ха, господин, куракан пулнӑ хыҫҫӑн нимуй пулас килет-и санӑн?

Кӗвӗ янӑраса каять. Маска тӑханнӑ кӑрше-аршӑ каллех ташлать. Вӗсен умне Робин тухса тӑрсан шӑв-шав та шӑпланать. Пурте ун ҫине тӗлӗнсе тинкереҫҫӗ. Робин ҫӗнӗ тумпа, ҫап-ҫутӑ пушмакпа.

1-мӗш маска. Кам ку?.. Эсӗ палларӑн-и?

2-мӗш маска. Ҫук-ха... Пирӗн кӑршӗ... Робин мар-и?..

Гуарди. Ывӑлӑм, эсех-и ку?.. Ывӑлӑм! Эпӗ сана куратӑп! *(Пырса ывӑлне ыталать.)*

Тӗттӗмленет.

## Тӑваттӑмӗш курӑну

Ҫутӑ ҫуталсан — унччен вырӑнтах, хулан пӗр кӗтесӗ.

Жеан *(Робина аякӗнчен тапса)*. Эй, эс! Ыйхӑ чӑпти, ан харлаттар! Тӑр! Эс кунта та хӑвна ҫемҫе тӳшек ҫинче выртнӑ пекех туйтӑн пулас?

Робин *(тӑрса ларать, куҫне сӑтӑркалать, темшӗн ӑна ҫак самантра тӗлӗкри ҫап-ҫутӑ туфли аса килет, хӑй уринчи пушмакне тытса пӑхса)*. Пылчӑкла... ҫӗтӗлнӗ... пушмак теме те ҫук... Мӗнле-ха ку таранччен тӑхӑнса ҫӳретӗп ӑна эпӗ?! Тин кӑна манӑн урара пурте ӑмсанмалла ҫап-ҫутӑ та ҫӗнӗ пушмакчӗ... Анчах тӗлӗк вӑл тӗлӗкех... Ҫын атӑ-пушмакне тасатаканӑн хӑйӗн ал-ури пирки шутлама вӑхӑт та ҫук. Ҫӗтӗк пушмакпа ҫӳреме, паллах, аванах мар... Ятарласа укҫа пухатӑп та ҫӗнӗ туфли илсе тӑхӑнатӑпах. *(Сиксе тӑрать.)*

Бирон. Ирпе курнӑ мӑн кӑмӑллӑ типа астӑватӑн-и-ха эсӗ?

Робин. Ну, астӑватӑп.

Жеан. Пӗлетӗн-и, эпир Биронпа мӗн шутларӑмӑр?

Робин. Мӗскер?

Жеан. Енчен те вӑл хӑйӗн туфлине тасаттарас тесен эпир ун енне ҫаврӑнса та пӑхмӑпӑр.

Бирон. Патне те пымӑпӑр.

Робин. Чӑнах-и?

Бирон. Чӑн сӑмах.

Робин. Апла килӗшместӗр...

Бирон. Чим, чим!.. Килӗшместӗр мар, килӗшместпӗр! Эсӗ мӗн, пирӗнпе пӗрле мар-им?

Робин. Эпӗ яланах сирӗнпе-ха, хирӗҫ мар. Виҫҫӗн ӗҫлеме те хаваслӑрах тата ытларах ӗҫлесе илме те пулать.

Жеан. Укҫа сана та кирлӗ-и?

Робин. Эсӗ вара мӗнле шутлатӑн? Мӗншӗн эпӗ кунта ҫапкаланса ҫӳретӗп тет?

Жеан. Ну, вӑт! Апла эсӗ пирӗнпе. Калаҫса татӑлар: ҫав типшӑн нимӗн те тумастпӑр.

Бирон. Ӑнлантӑн-и? Хӑйне мӑнна хуракан кашни ҫын пушмакне тасатма тытӑнсан нимӗнле хисеп те кураймӑпӑр.

Робин. Анчах ку таранччен такамӑнне те тасатнӑҫке! Ӑнланмастӑп, мӗншӗн ҫыпҫӑнатӑр ҫав ҫын ҫумне?

Бирон. Ан айванлан! Ҫав тип пире питӗ кӳрентерчӗ!

Робин. Кӳрентерчӗ? Хӑҫан? Мӗнпе?

Жеан. Хӑҫан тетӗн-и? Отельрен утса тухсанах.

Бирон. Мӗнпе?.. Вӑл пирӗн енне ҫаврӑнса та пӑхмарӗ.

Робин. Ҫаврӑнса та пӑхмарӗ!.. Мӗншӗн-ха унӑн пурин ҫине те пӑхмалла?

Бирон. Итле эппин, Робин. Енчен те эсӗ пуян пулнӑ пулсан, хӑна ҫуртӗнче пурӑннӑ пулсан нивушлӗ ҫав ҫын пекех пирӗн умран мӑн кӑмӑллӑн иртсе кайнӑ пулӑттӑн?

Нивушлĕ пирĕн умра сăмсуна каçăртăттăн? Шурă ӳтлĕ çынсем те ав пире ĕçшĕн тав тăваççĕ, пирĕнпе кăмăллăн калаçаççĕ.

Робин. А-а... Ав мĕн иккен...

Жеан. Тинех сан хурану вĕреме пуçларĕ... Эсĕ питĕ хытă çыврăнă пулас çав. Часах вăранса çитĕн, ыйхă чăпти. *(Кăшт тăхтасан.)* Ну, килĕшетĕн-и?

Робин. Килĕшетĕп те, килĕшместĕп те.

Бирон. Ку — хурав мар. Пĕр сăмахпа кала — е «çук», е «килĕшетĕп» те.

Робин. Хам мĕн шутланине эпĕ халех сире ăнлантаратăп.

Хăна çуртĕнчен тăватă арçын тата дама тухать. Ачасем тӳрех вĕсем патне ыткăнаççĕ. Дамăпа пĕр арçынĕ калаçкаласа чарăнмасăр иртсе каяççĕ.

Робин. Патрон, пушмакăра тасатма ирĕк парсам...

Бирон. Мсье, пушмакăра тасатма...

Жеан. Патрон, тасатма, тархасшăн...

Ачасен умĕнче виçĕ арçын чарăнаççĕ те пушмакĕсене тасаттараççĕ.

Çутă сӳнет.

## Пиллĕкмĕш курăну

Çуталсан — çав вырăнтах. Виçĕ арçын ача — Робин, Бирон тата Жеан.

Бирон. Ну, хăвăн шухăшна кала...

Робин. Ман шутпа, укçа кирлĕ чух нимĕншĕн те шăртланмалла мар.

Жеан. Вăт-вăт... Эсĕ пирĕнпе пĕр шутлă пулни питĕ кулăшла пулĕччĕ. Санран эпĕ урăхла хурав кĕтмен те. Эсĕ те-и, Бирон?

Бирон. Паллах, эпĕ те.

Робин. Каласа пĕтерме ирĕк парăр, тархасшăн, кайран тавлашăпăр.

**Бирон.** Тата мӗн калама пултаратӑн-ши эсӗ? Ахалех паллӑ, эсӗ пурин пушмакне те тасатма хатӗр. Тепӗр чух укҫасӑр та. Эпир вара сан пек мар — тасатмастпӑр! Малашне те хӑваннех перетӗн тӗк — пирӗн пирки манма пултаратӑн. Ӑнлантӑн-и?

**Робин.** Ман сирӗнтен уйрӑлас килмест. Анчах эпӗ тӗрӗссине калатӑп-ҫке. Сӑмахран, шурӑ ӳтлӗ ҫын сӑмсине каҫӑртнӑ пулсан, тен, эсир ӑна асӑрхамастӑрччӗ те.

**Жеан.** Ку вӑл урӑх калаҫу, мӗншӗн тесен шурӑ ӳтлӗ ҫын пирӗн пекки умӗнче яланах сӑмсине каҫӑртать.

**Робин.** Апла шурӑ ӳтлӗ ҫын сӑмсине каҫӑртнӑшӑн кӳренместӗр? Пӗрре те ҫилленместӗр-и? Мӗншӗн-ха хура ӳтлӗ ҫынна ҫакӑншӑн чӑтма пултараймастӑр? Тен, вӑл хӑйне мӗнле тыткалани тӳрех килӗшмерӗ сире?

**Бирон.** Ҫитет, Робин. Пире хирӗҫ шӑлна хӑйрама пӑрах. Кала тӳррипе, эсӗ халь мӗн тӑвасшӑн?

**Робин.** Яланхиллех кӑштах укҫа ӗҫлесе илесшӗн. Урӑх нимӗн те.

**Жеан.** Ҫав ҫын хӑйӗн пушмакне тасатма ыйтсан килӗшӗн-и вара эсӗ?

**Робин.** Лӑпланӑр. Темле пулсан та хам малтан ун патне пымӑп. Пӗлетӗп, пирӗн енне вӑл сурас тесе кӑна пӑхса илме пултарать. Анчах хӑй килсе пушмакне тасатма ыйтсан эпӗ турткаланмӑп. Вӑл та ытти ҫын пекех.

**Жеан.** Бирон, илтетӗн-и? Ытти ҫын пекех тет.

**Бирон.** Мӗн тӗлӗнмелли? Вӑл сутӑнчӑк пулнине эпӗ питӗ лайӑх чухлатӑп. Жеан, эсӗ те ҫакна пӗлетӗн вӗт?

**Робин.** Асту! Сӑмахусене суйласа калаҫ! Кам сутӑнчӑк пулни хальлӗхе паллӑ мар-ха...

**Бирон.** Ну, кала, кам-ха, эппин, эс?.. Кала тетӗп, анчӑк ҫури!

**Робин.** Халех эсӗ эпӗ камне пӗлӗн. *(Хӑй патнелле ҫывхаракан Бирона тӗксе ярса.)* Ак сана! Ҫакӑ кирлӗ те! Ну, мӗнле пек?

Бирон *(сулăнса каять те çурт кĕтессине пырса çапăнать)*. Ай-ай! Жеан, пулăш!

Жеан. Кил кунталла, Бирон! Эпир ăна иккĕн часах вĕрентсе илĕпĕр! Чыш-ха хытăрах! Чăмăрна ан хĕрхен! Лайăхрах чыш!

Бирон. Ах, пĕчĕк анчăк! Халех курăн эсĕ кама хирĕç тăнине!

Жеанпа Бирон хупăрласа илсе Робина пусса ÿкереççĕ, унтан тротуар тăрăх сĕтĕрме пуçлаççĕ.

Робин *(пур вăйран)*. Ай-ай!.. Ай!.. Вĕлереççĕ вĕсем мана! Пулăшăр!..

Сутуçăсем чÿречисене уçаççĕ. Мĕн пулса иртнине ăнлансан кулкалама пуçлаççĕ.

1-мĕш сутуçă. Ха-ха-ха!.. Ну, тинех чунĕ каниччен тÿпелешеççĕ ĕнтĕ!

2-мĕш сутуçă. Хе-хе-хе!.. Кансĕрлер мар...

1-мĕш сутуçă. Кансĕрлер мар çав, пĕр-пĕрне лайăх ислетчĕр!

2-мĕш сутуçă. Ислетчĕрех!..

1-мĕш сутуçă. Вара, тен, çакăн пек çапăçу хыççăн шăплăх хуçаланĕ кунта... Ха-ха-ха!

2-мĕш сутуçă. Хе-хе-хе!.. Кур-ха, кур! Лешне, айванраххине, мĕнле тÿнккеççĕ! Хе-хе-хе!..

1-мĕш сутуçă. Куратăп-ха. Ха-ха-ха!

2-мĕш сутуçă. Хе-хе!..

Çутă сÿнет.

## Улттăмĕш курăну

Çуталсан — çав вырăнтах. Çăмăл машина килсе чарăннă сасă. Машинăран иккĕн тухаççĕ: пĕри — Поль, тепри — Жорж. Çапăçма чарăннă Биронпа Жеан тÿрех вĕсем патнелле чупаççĕ.

Бирон. Мсье, пушмакна тасатма ирĕк парсам!..

Жеан. Патрон, тасаттар!..



И-47527
Национальная библиотека
Чувашской Республики

Робин майёпен тăрать, тумтирне çӳп-çапран, тусанран тасатать. Шăм-шакĕ питех те ыратать пулас.

Робин *(кăшкăрса)*. Хăравçăсем! Намăс мар-и сире пĕччене иккĕн тапăнма? Каппайчăксем! Эсир чăнласах хăвăра чăн-чăн арçын вырăнне хуратăр пулсан килĕр пĕрерĕн! Курăпăр ун чух!

Робин сăмахне хăлхана чикмесĕр Жеанпа Бирон çаплах килнĕ çынсенчен пушмакĕсене тасаттарма ыйтаççĕ. Польпе Жорж хăйсен урисем çине пăхаççĕ.

Поль *(пуçне сулса)*. Кирлĕ мар.

Жорж *(пуçне сулса)*. Манăн та йĕркеллех.

Бирон. Ну, мсье...

Поль *(Бирона)*. Эс мĕнле шутлан: эпир кунтан кунне вунă хут иртсен пирĕн кашнинчех пушмака тасаттармалла-и?

Жорж. Çук, паллах. Вĕсемпе кашнинчех килĕшме пулать-и вара? *(Тем аса илсе.)* Курсам, мĕнле чухăнлăх! Чăнахах, мĕнлерех нишлĕх! Çак пĕр пĕчĕк хулара çеç мĕн чухлĕ çапкаланчăк! Ун пекки сахал-и çĕршывра, тĕнчере?

Жоржпа Поль калаçкаласа утаççĕ. Ачасем сăмах чĕнмесĕрех вĕсем патĕнчен çухалаççĕ.

Поль. Кунта, Жорж, эсĕ каланипе питех килĕшместĕп. Ку ачасем — çапкаланчăксем мар.

Жорж. А мĕн темелле-ха вĕсене, хăйсене кăштах та пулин укçа пама ыйтаканскерсене?

Поль. Итле, вĕсем вĕт санран ахаль мар, ĕçленĕшĕн ыйтаççĕ. Çавăнпа манăн вĕсенчен пĕрне те çапкаланчăк тесе калас килмест. Тĕрĕссипе, вĕсем тӳсĕмлĕскерсем.

Жорж. А-а-а... Паллах, тӳсĕмлĕ-чăтăмлă... Çапах та çакă сана килĕшет-и?

Поль. Мĕн тесшĕн-ха эс кунпа?

Ж о р ж. Вĕсен харсăрлăхĕ тата кашнинчен укçа ыйтни сана килĕшет-и тетĕп?

П о л ь. Атя, Жорж, уйрăмлăх пирки манар мар. Çапкаланса çӳрекен вăл аллине тăсса укçа пама тархаслать, кĕлмĕçленет...

Ж о р ж. А-а-а... Тепĕр чух кунне темиçе хутчен те!

П о л ь. Тепĕр чух темиçе пус та! Эпир вара, тĕслĕхрен, хăй ĕçĕпе укçа ĕçлесе илекен çамрăк çын пирки калаçатпăр. Ăна эсĕ ĕçшĕн тӳлетĕн.

Ж о р ж. А-а! Мана вара уншăн та, хамшăн та намăс.

П о л ь. Мĕншĕнне ăнланмастăп.

Ж о р ж. А мĕншĕн тесен йĕркеллĕ çын хăйне апла тытмасть. А... а... мĕншĕн тесен ăна урама ашшĕ-амăшĕ юри çапкаланса çӳреме кăларса янă. Иртен-çӳрене çавăн пек çапкаланчăк сывлама памасть вĕт. Сăмахран, мана тата та намăсрах: ман туфлие пĕчĕкçĕ негр — негр ачи тасатать... Эпĕ мĕн, пĕр-пĕр господин-и, вăл вара ман чура-и?..

П о л ь. Мĕнле ăнланмастăн эс, Жорж?.. Нивушлĕ?.. Курмастăн-им? Вĕсем пушмак тасатакансем... Нивушлĕ куçу курмасть, çав пушмак тасатакан кашни ача — ĕçлекен...

Кама кама та, анчах ку ачасем пирки çапкаланчăк тени вырăнсăр. Вĕсем çапкаланса çӳремеççĕ... Ун пек калама май та çук... Мĕнех, вĕсен ĕçĕ услам тумаллиех мар, эс калашле, хамăра мĕскĕнлетекен ĕç пултăр. Анчах санпа килĕшместĕп. Вĕсем ниме пăхмасăр тăрăшаççĕ, ĕçе хăнăхаççĕ вĕт. *(Кăштах шутласа тăрсан.)* Пĕлетĕн-и, Жорж? Пирĕн континентра пур çĕрте те çакăн пек пушмак тасатакансем кирлĕ...

Çутă сӳнет.

## ИККĔМĔШ ПАЙĔ

Сцена умĕ.

Пысăк урасем каллех пĕр чарăнми утаççĕ. Вĕсем тавра каллех пĕчĕк щеткăсем явăнаççĕ.

1-мĕш щетка. Санăн пушмакна тасатма ирĕк парсам, мсье!..

2-мĕш щетка. Тасаттар, тархасшăн, мсье!..

3-мĕш щетка. Мсье, тархасшăн!..

Урасем чарăнса тăмасăр утаççĕ. Часах вĕсем патĕнчи щеткăсем те курăнми пулаççĕ.

Çутă сӳнет.

## Пĕрремĕш курăну

Çутăлсан — хулан çав кĕтессиех. Тепĕр кунне. Пушмак тасатакан ача-пăча сасси илтĕнет каллех. Эдмон хăна çуртĕнчен тухать, ачасем патне пырать.

Эдмон. Паян камăн тасатма черет?

Жеан *(савăнса)*. Манăн!

Эдмон. Кил кунта!

Жеан Эдмон патне пырать. Кĕвĕ илтĕннĕ май çынсем калаçкаласа унталла-кунталла иртеççĕ. Часах пушмак тасатакан ачасем пĕр çĕре пухăнаççĕ. Жеан кăмăлсăр.

Робин. Мĕн пулнă сана?

Жеан. Мĕн пулнă, мĕн пулнă?.. Сан тусу сана кăна лайăх тӳлет.

Робин. Эсĕ вара мĕн чухлĕ ĕçлесе илтĕн?

Жеан. Ак кур... Эс те кур, Бирон...

Бирон. Çирĕм франк?.. Çирĕм, паллах, аллă мар.

Робин. Çитĕ... Мĕн уншăнах ĕсĕклемелли? Ку вăл — ыттисем тӳлениниченчен пурпĕр нумайрах. Çапла мар-и вара?

Жеан. Сана калама лайăх.

Бирон. Саншăн çапла пулĕ те...

Жеан. Вăл ĕнер аллине алă франк çавăрса илнĕ те паян уншăн теприне сахал тӳлени ним те мар. Ун çине сурма та хатĕр. Мĕн, çапла мар тесшĕн-и?

Робин. Апла мар çав. Эсĕ пурпĕр хăв ĕçӳшĕн нумайрах илнĕ.

Жеан. Мĕн тесшĕн-ха кунпа? Эпĕ санран начартарах тасататăп-и? Суймасăр кала-ха.

Робин. Чăннипех калатăп: ман пекех тасататăн. Анчах тасаттаракан сан ĕçӳпе кăмăлсăр юлма пултарнă. Унсăрăн вăл сана та ĕнер мана тӳленĕ пекех, алă франк, тӳленĕ пулĕччĕ.

Бирон. Эп сире ĕнерех каларăм-çке: кунта ниçта та пушмак тасатнăшăн алă франк тӳлеменнине кунĕпе хулара çӳресе пĕлнĕ ĕнтĕ вăл.

Робин. Апла пулсан, Бирон, сана унпа çыхланма сĕнместĕп, ыран вунă франк кăна тӳлĕ.

Бирон. Кулма ăста эс, Робин. Ку вăл вĕт — тĕрĕсмарлăх, пысăк ултав!

Робин. Эпĕ пĕртте куласшăн мар-ха, ĕçе татса парасшăн. Клиент паян алă франк, ыран çирĕм кăна тӳлет тĕк ун пирки мĕн шутланă пулăттăн?

Жеан. Тен, вăл сана кăна алă франк тӳлеме шутланă мар-ши? Э-э?

Робин. Сире вара çирĕм кăна-и? Ăнлантар эппин — мĕншĕн?

Бирон. Эй, çитет вăхăта сая ярса! Курăр-ха...

Хăна çуртĕнчен Польпе Жорж тухаççĕ. Ачасем тӳрех вĕсем патнелле ыткăнаççĕ.

Бирон. Мсье, тасатма!..

Робин. Патрон, тасатма ирĕк парсам!..

Жеан. Патрон! Пĕр самантрах сан урунти туфли çапçутă пулĕ. Шеф, чăнахах, курăн акă...

Поль Жеана тасаттарма килĕшет, Жорж вара хăвăрт кăна тухса каять. Ачасем ăна хăваласа чупаççĕ, лешĕ чарăнманнипе тăрса юлаççĕ.

Робин. Пăхма йĕркеллĕ çын пекех хăй.

Бирон. Çав йĕркеллĕ çын-и? Йĕркеллĕ пулсан мĕншĕн пушмакне тасаттарма килĕшмерĕ? Чăннипех те йĕркеллĕ пулнă тăк вăл пире ăнланĕччĕ. Çук, çын мар вăл...

Робин. Бирон, апла ан кала. Мĕншĕн тесен хăшĕ-пĕри пире хăйсен пушмакне тасаттармасан та пултарать...

Бирон. Ну, паллах. Анчах эсĕ хăвна мĕн каланине тăнла. Итлемесен эп сана пĕрре аса илтерĕп-ха. Хăвах курăн.

Машина чарăннă сасă. Ачасем харăссăн пĕр еннелле çаврăнаççĕ, хытса тăраççĕ: машина хуçи Эмиль курăнать.

Робин. Кам-ха ку?

Жеан. Ĕнер каçăрăлса иртнĕ çын шăпах кунталла килет.

Бирон. Вăл пире темĕн каласшăн пулас.

Робин. Кур-ха, паян та васкамасăр утать... Мĕншĕнха вăл машинине хăна çуртĕнчен аякка кайса лартрĕ?

Бирон *(Робина шăппăн)*. Ку вăл — ĕнерхи! Эпир ĕнер мĕн калаçса татăлнине аса ил. Вăл калаçас пулсан пĕр сăмах та ан хуш. Ан чĕн! Ăнлансам, Робин! Пĕр сăмах та ан хуш!

Робин *(тусĕсем патнерех пырса)*. Курăр-ха, кунталла килет!

Бирон. Çавăн пек тип умĕнче пирĕн мĕскĕнленме юрамасть. Ĕнер, тархасласа ыйтнă чух, вăл пирĕн енне çаврăнса та пăхмарĕ.

Сутуçăсем чўречисене уçаççĕ, сăнаççĕ, мĕн те пулин сиксе тухасса кĕтеççĕ. Эмиль хăна çуртне кĕрсе каять. Ачасем унталла-кунталла саланаççĕ, унтан каллех пухăнаççĕ.

Жеан. Ну, туссем, мĕнле ĕçлерĕр?


LION
NOIR
A LA CNRE

Бирон. Тӗлӗнмелле лайӑх!

Робин. Пит аван!

Жеан. Маттур эсӗ, Бирон! Эсӗ те, Робин! Кашниех ылтӑн алӑллӑ эсир! Ҫапла, ҫапла, сан аллу та ылтӑн! Мана та ӑнӑҫрӗ. Килӗр-ха кунта, курӑр... *(Кӑтартать.)*

Робин *(ӑнланмасӑр)*. Мӗн?

Бирон *(хӑй куҫӗпе мӗн курнине ӗненмесӗр)*. Ҫӗр франк?

Жеан. Куратӑн-и, Робин? Эпӗ те ӗҫлеме пӗлетӗп. Пирӗнтен хӑшӗ лайӑхрах тасатнине калама пултаратӑн-и халь?

Робин. Ҫӗр франк... Эсӗ паянхишӗн ӗҫлесе татрӑн та. Сана паян урӑх ӗҫлемесен те юрать. Киле кайма пултаратӑн. Ырансӑр сана кураймӑпӑр...

1-мӗш сутуҫӑ *(ачасем еннелле)*. Эсир те кун пек ӗҫлесе илме пуҫларӑр тӑк часах машина туянатӑр ӗнтӗ.

Жеан. Ӑхӑ. Эпир питӗ пысӑк машина туянасшӑн-ха. Пурӑнатпӑр вара...

Бирон. Вара кашни кунах сана лартса, ҫак ӑпӑр-тапӑрна тиесе, кунта сутма турттарса килӗпӗр.

1-мӗш сутуҫӑ. Аван, пит аван! *(Иккӗмӗш сутуҫӑ еннелле.)* Ҫук-ҫук! Кур-ха эсӗ ҫак анчӑк ҫурисене! Вӗсем манран тата сутма ӑсталанӑ манӑн маскӑсенчен тӑрӑхлаҫҫӗ вӗт. *(Ачасене.)* Сирӗнтен хӑшӗ тӗкӗнӗ вӗсене малашне, ҫавӑнне алли-урине ҫапса хуҫӑп! Ҫапла, эп каланине астӑвӑр!

Сутуҫӑсем чӳречисене хупаҫҫӗ. Машина хуҫи, Эмиль, ачасем патнелле ҫывхарать. Аллине малтан пӗр кӗсйине, унтан теприне чиксе пӑхать. Кайма тӑрать. Унтан хӑйӗн туфлийӗ ҫине пӑхса илет.

Эмиль *(чарӑнса тӑрса)*. Тасаттарсан та пӑсмасть... *(Жеан еннелле.)* Эй, ачамкка! *(Ачасем илтмӗше пенипе тепӗр хут калать.)* Эй, ачамкка, тетӗп!

Жеан *(юлташӗсене шӑппӑн)*. Чӑтӑмлӑ пулӑр, ан чӗнӗр!..

Эмиль. Итлӗр-ха, пушмак тасатакансем! Манӑн туфлие тасатаймӑр-ши? Анчах хӑвӑртрах, ман васкамалла.

Мĕншĕн сирĕнтен пĕри те хыпаланмасть? Мĕн пулнă? *(Никам та чĕнменнипе.)* Эсир хăлхасăр-и? Илтми пулнă-и? Ман туфлие тасаттарас килет. Тасатмастăр пулсан мĕншĕн кунта хăвăр ешчĕкĕрсене сĕтĕрсе çӳретĕр? *(Жеан еннелле.)* Эй, эй! Кил-ха кунта туфли тасатма! Илтетĕн-и?

Жеан. Эпĕ-и?

Эмиль. Ну, эсĕ тейĕпĕр... Пурпĕрех. Ну, хăшĕ те пулин, эппин...

Жеан. Нихăçан та! Кĕтсе илеймĕн!

Бирон. Эпĕ те ним парсан та килĕшмĕп! *(Шăппăн.)* Робин, эсĕ вара? Эсĕ мĕн, ăна хирĕç калаймастăн-им? Вăл пирĕн клиент мар. Ну, кала ĕнтĕ!

Робин. Вăл манран ыйтмарĕ-ха, эппин, мĕн хуравламха эпĕ сире?

Эмиль *(Робина)*. Эсĕ ман туфлие тасатас теместĕн-и?

Робин. Эсĕ, господин, çапла ыйтатăн пулсан... Эпĕ хирĕçлеме пултараймастăп. Юрĕ, тасататăп сирĕн туфлие.

Бирон. Пĕтерсе хучĕ, йĕксĕк!

Жеан. Намăса пĕлмен ирсĕр чун вăл, урăх никам та мар!

Жеанпа Бирон Робин çине сиксе ӳкеççĕ: сураççĕ, чышаççĕ, тĕрлĕрен усал сăмах калаççĕ. Эмиль вĕсене чарать. Жеанпа Бирон кайма тăраççĕ.

Робин *(кăшкăрса)*. Пурпĕрех çак господинăн туфлине тасататăп! Пирĕнтен хăшĕ ирсĕр чунлăраххине курăпăрха! Эсир вара?.. Хăвăр пули-пулми ĕçлесшĕн мар тата çапăçас тесен яланах пĕччене иккĕн тапăнатăр!

Бирон. Юрĕ, юрĕ. Ку пуçламăшĕ кăна-ха... Мĕн пулассине курăпăр.

Жеан. Мĕнех! Тасат, тасат унăн туфлине! Кайран хăвнах лекĕ уншăн.

Робин. Эсир мĕн, малашне те эпĕ сирĕнпе ĕçлетĕп тетĕр-и? Çук, паллах! Çитет! Паянтан пирĕн туслăх ар-

канчĕ тейĕпĕр. Эсир мана пурăнма, ирĕклĕн ĕçлесе илме чăрмантаратăр тăк манăн тек сăмах та çук. Ман хыççăн урăх ан та çӳрĕр!

Жеанпа Бирон тухса каяççĕ.

Эмиль. Ну, ĕçе тытăн, йĕкĕт!

Робин ĕçлеме пикенет.

Эмиль. Итле-ха, тăванăм. Мĕншĕн санăн юлташусем хăйсем те илтмĕше печĕç, сана та ман туфлие тасаттарасшăн пулмарĕç?

Робин. Çакна ăнлантарма йывăр, патрон. Мĕншĕн тесен хам та лайăххах ăнланмастăп.

Эмиль. Кала-ха, мĕн пулнă?

Робин. Пĕлместĕп, патрон. Эсĕ айăплă.

Эмиль. Эпĕ айăплă-и?

Робин. Çапла, патрон. Ĕнер эсĕ пирĕн умран ним пулман пек, пирĕн çине пăхмасăр, мăн кăмăллăн иртрĕн. Пач çаврăнса пăхмасăр хăвăн машинуна президент пек кĕрсе лартăн та тапранса кайрăн. Вăт çапла, патрон.

Эмиль *(ахăлтатса кулать)*. Ха-ха-ха!

Робин *(ĕçленĕ çĕртен пуçне çĕклесе)*. Мĕншĕн эсĕ ун пек кулатăн, патрон? Эпĕ тĕрĕс мар каларăм-и?

Эмиль. Питех те тĕрĕс, тусăм.

Робин. Ĕнер мĕн пулнă вара сана, патрон?

Эмиль. Ĕнер-и? Ĕнер... Эпĕ астумастăп та. Чим-ха, мĕн пулнăччĕ-ха ĕнер? Нимех те пулман! Эсĕ халь калани ман пуçра та пулман. Çавăнпа çилленчĕç-и сан тусусем? Нивушлĕ вĕсем сана çавăншăн хĕнерĕç? Нивушлĕ паян çавăнпа вăрçрĕç?

Робин. Çапла. Çавăншăн, патрон.

Эмиль *(сасăпа кулса)*. Ха-ха-ха! *(Унтан Жеанпа Бирон еннелле çаврăнса.)* Эй, арçын ачасем! Килĕр-ха кунта, тархасшăн! Килĕр-ха!

Жеанпа Бирон пĕр-пĕрин ҫине пăхкаласа ҫывхараҫҫĕ.

Жеан. Эсĕ илтрĕн-и, Бирон? Пире чĕнет вăл.

Бирон. Мĕн кирлĕ ăна?

Эмиль. Ачасем, ман сире ҫеҫ каламалли пур.

Робин *(тӳсеймесĕр, сиксе тăрса)*. Ҫапла, ҫапла! Хăравҫăсем, килĕр кунта! Никам та ҫыртмĕ сире. Харсăрсем, манăн патрон пĕрре те эсир шутланă пек мар!

Жеан. Чун илли эс! Эпир вĕт кашнинех лайăх пултăр тесе килĕшмерĕмĕр! Сана та...

Эмиль. Килĕр! Килĕр кунта! Ман сирĕн валли ĕҫ пур, чăнах та.

Жеанпа Бирон хуллен пырса тăраҫҫĕ.

Эмиль. Ĕнер эпĕ, чăнах та, никама асăрхамасăр иртсе кайнă иккен. Эсир ҫакăншăн кӳреннĕ-мĕн. Ку тĕрĕс сăмах-и?

Бирон. Ҫапла, шеф. Ҫавăнпа эпир санăн пушмакна тасатасшăн марччĕ.

Эмиль. Халĕ шăпах каҫару ыйтас тесе чĕнсе илтĕм сире. Эпĕ те ахальтен ҫапла утса иртмен вĕт, манăн васкамалла пулнă... Эсир шутлани: «Вĕсем маншăн тĕнчере те ҫук!» тени — тĕрĕс мар. Ну, мĕнех? Каҫаратăр-и мана?

Кăшт тăхтасан Биронпа Жеан пуҫĕсене сĕлтсе килĕшеҫҫĕ.

Робин. Икĕ чун илли! Ку лайăх ҫын тесе каларăм вĕт сире ĕнерех. Вăл, тен, халиччен никама та начар пултăр темен, вăл...

Бирон. Юрĕ, юрĕ. Эсĕ яланах тĕрĕссине ҫеҫ каланине пĕлетпĕр-ҫке.

Эмиль. Халĕ, сирĕнпе мирлешнĕ хыҫҫăн, пушмакăма кашнинчех тасаттарма пултаратăп-и эпĕ?

Бирон. Паллах, патрон.

Жеан. Паллах.

Эмиль. Апла ёҫе пуҫăнар... Тĕрĕсрех каласан вĕҫлер тесен те юрать. Э-э... эпĕ сирĕн ятăрсене те пĕлместĕп вĕт. Манăн пушмака тасатаканĕ мĕн ятлă, сăмахран?

Робин. Патрон, мана Робин тесе чĕнеҫҫĕ. Ку — Жеан, ак ку — Бирон. Сана хăвна мĕнле чĕнеҫҫĕ, патрон?

Эмиль. Мана-и?.. Мана... *(Хуҫкаланса, ним калаймасăр тăрать.)*

Ҫав вăхăтра Жеанпа Бирон урăх ҫынсене асăрхаҫҫĕ те тĕрлĕ еннелле чупаҫҫĕ.

Робин *(кăшкăрса)*. Жеан, ман патрон ҫумне ан ҫыпăҫ! Вăл ман патрон, ăнлантăн-и?

Эмиль. Итле-ха, эсĕ ĕҫлеме тытăннăччĕ мар-и?

Робин. Каҫар, патрон, эпĕ халех вĕҫлетĕп. Пĕлетĕн-и, мĕнлескер вăл Жеан? Яланах урăххин клиенчĕ килĕшет ăна. *(Тасатса пĕтерет.)*

Эмиль Робина ҫĕр франк тыттарать.

Робин. Тавах, патрон, пысăк тав! Пĕлетĕн-и, эпĕ санăн машинуна та ҫуса тасатăп.

Эмиль. Юрать, Робин. Тасатас килсен...

Робин. Анчах ҫакна эпĕ кăна, Робин, пурнăҫлăп. Робин кăна! Урăххи никам та мар.

Эмиль. Пит аван.

Робин. Тата санăн машинуна сыхлăп... Мĕншĕн тесен кунта час-часах ҫаратаҫҫĕ.

Эмиль. Эс манăн машинăна чăнласах сыхласшăн-и? Каҫпа та, кăнтăрла та-и?

Робин. Мĕскер эсĕ патрон?! Каҫпа хураллаймастăп! Каҫпа эпĕ килте, аттепе.

Эмиль. Хăҫан-ха, эппин?

Робин. Паллах, кăнтăрла, патрон. Ун чухне кунта ҫын нумай. Вĕсем пур ҫĕрте те сăнама, тепĕр чух машинăран мĕн те пулин йăкăртма та юратаҫҫĕ. Эсĕ, сăмахран,


LION NOIR
CAFÉ

машинăра сигарет е укçа, е пĕр-пĕр япала... хăварнă тейĕпĕр... Эпĕ вара яланах юнашар. Вăрра хăваласа çитĕп...

Эмиль. Ăнланмалла. Пит аван. Эпĕ хуланалла тухсан эсĕ кунта манăн машинăна сыхлани питĕ аван.

Робин. Эсĕ пирĕн патра хăçанччен пулатăн, патрон?

Эмиль. Хамăн ĕçе вĕçличчен.

Робин. Мĕнле ĕç вăл санăн?

Эмиль. Ну, йĕкĕт! Ытла та пурне те пĕлесшĕн. Паянах эп сана çакна калаймăп-ха. Анчах хăвăн ĕçне тĕплĕн пурнăçласан каяс умĕн хамăн ĕçе кăтартма шантаратăп. Виççĕре те. Тата, çитменнине, эсĕ ман валли питĕ лайăх шухăш тупрăн. *(Каять.)*

Арçын ачасем пĕрле пухăнаççĕ.

Робин. Кам-ха вăл? *(Хăй мĕн чухлĕ ĕçлесе илнине юлташĕсене кăтартать.)*

Бирон. Чăннипех лайăх çын иккен вăл, Робин.

Жеан. Тĕрĕс. Робин, ан иккĕлен, начар çын мар вăл.

Арçын ачасем савăнса сиккелеççĕ. Сутуçăсем чӳречисене уçаççĕ.

1-мĕш сутуçă. Халĕ ак савăнаççĕ-ха вĕсем!

2-мĕш сутуçă. Туссем туслашнă!

1-мĕш сутуçă. Тепĕр сехетренех урăх ӳкерчĕк курăпăр. Вĕсене, вăрă-хурах сăнлăскерсене, курса киленĕпĕр... Ха-ха-ха!

2-мĕш сутуçă. Мĕнех... халь чăнах та чăн-чăн туссем пекех савăнса кăтиклетеççĕ. Хе-хе-хе!

Çутă сӳнет.

## Иккĕмĕш курăну

Çуталсан — Робин шурă машина умĕнче.

Робин. Акă мĕнлерех вăл! *(Машинăна пăхса çаврăнса.)* Мĕншĕн-ха шалта икĕ ларкăч кăна? Кунпа пĕр харăс

хăйĕн ҫемйине те, юлташĕсене те лартса ярăнтараймĕ. Машинăна нумайрах ҫын лартса ҫӳреме ăсталаççĕ вĕт. Ҫакăн пек илемлĕ машинăра вара икĕ ҫын валли ҫеç вырăн пур. Ку манăн пуҫа ниепле те шăнăҫаймасть. Э-э, унăн ҫемйи ҫук-шим? Тен, юлташĕ те сахал? Мĕнле-ха, ҫĕр ҫинче нумай ҫын ҫуран ҫӳренĕ чух хăвăн пирки кăна шутламалла-и? Джунглипе пынă чух ку машинăна пĕр чухăна та лартаймăн! Кашнин умĕпех пĕр чарăнмасăр шăлтарĕ ахăртнех. Чаплă пурăнать ку ҫын! Мĕншĕн-ха вăл ҫакăн пеккине туяннă? Мĕншĕн ыттисем пирки шутламалла мар?

Эмиль хăна ҫуртĕнчен тухать те машини патне пырса уҫҫине кăларать, алăка уҫать.

Робин. Пурте йĕркеллĕ-и, шеф?

Эмиль чĕнмесĕр юнашарти ларкăч ҫине тем хурать те тапранса каййма тесе руль умне кĕрсе ларать. Анчах темĕн аса илет те машинăран хăвăрт тухать, каялла, хăна ҫуртне, кĕрсе каять.

Робин. Ҫавăн пек пулать те ĕнтĕ! Эпĕ уншăн тăрăшатăп, тăрăшатăп... Вăл вара ҫакна асăрхамасть те. Ку ҫын, тĕрĕссипе, хăйĕн пуҫĕпе туслах мар пулас... Халь акă машина алăкне те питĕрмерĕ. Эпĕ пулман тăк ҫакна урăххи асăрхатчĕ. Ҫав япалана та ним мар ыйтмасăр илетчĕ. Эпĕ пулман тăк... Эх, патрон, патрон...

Бирон чупса кĕрет.

Бирон. Мĕн пулчĕ, Робин?

Жеан та, хăй ĕҫне вĕҫленĕскер, васкаса ҫитет.

Жеан. Ĕҫӳ мĕнле?

Робин. Нимле те мар. Пирĕн ҫĕнĕ туса ҫеç ав каллех тем пулнă...

Бирон. Мĕн пулнă?

Жеан. Кала-ха, тата мĕн пулнă ăна?

**Робин.** Пирĕн тус каллех хăйне мăн кăмăллă господин пек тыткалать. Куртăр-и? Тухрĕ те çиçĕм пек каялла, хăна çуртне, кĕрсе кайрĕ.

**Жеан.** Темĕн, асăрхамарăм.

**Робин.** Ĕçленĕ çĕртен ăçтан-ха курма пултарнă эсĕ ăна? Бирон, эсĕ те курмарăн-и?

**Бирон** *(пуçне сĕлтсе).* Э-э!..

**Робин.** Э-э мар, куртăн-и е çук? Эсĕ паян нимĕн те курман тесен те эпĕ тĕлĕнмĕп. Эсир хăвăра кирлине çеç куратăр вĕт. Эпĕ инкеке кăна лекем, тӳрех нимĕн те курмастăр.

**Жеан.** Итле-ха, Робин, мĕн найкăшан эсĕ? Мĕнле инкек? Никама кирлĕ мар калаçу çеç ку. Луччĕ мĕн пулнине йĕркипе кала.

**Бирон.** Хăвна хĕрхентересшĕн, шеллеттересшĕн пулас эсĕ...

**Жеан.** Анчах, тĕрĕссипе, эпир санпа мĕн пулнине те пĕлместпĕр-ха.

**Бирон.** Пĕлместпĕр çав. Кала-ха эппин, мĕн пулнă сана?

**Робин.** Юрĕ, калатăп. Эпĕ ак çакăнтахчĕ. Вăл тухрĕ те машина алăкне юри уçă хăварса çурта каялла кĕрсе кайрĕ. Мана асăрхамарĕ те.

**Жеан.** Мĕнех вара?

**Робин.** Мĕнле мĕнех вара? Эсир нимĕн те ăнланмастăр-и? Эпĕ унăн машинине сыхлатăп-çке!

Жеанпа Бирон ахăраççĕ.

**Жеан.** Итле-ха, тăванăм! Санран кула-кула хырăм ыратакан пулчĕ. Апла-ха эппин... Мĕн, сан шутупа, унăн кашни пушмак тасаттараканах хăйĕн машинине сыхлаттармалла-и?

**Робин.** Вăл хăй килĕшрĕ-çке-ха!

**Бирон.** Аха! Хай килĕшнĕ пулсан, мĕн, машина çумĕнче сана курсассăнах çăварне хăлхи патне çитиех кармалла-и унăн?

Биронпа Жеан кулаççĕ. Вĕсем ахăлтатнипе Робин та чăтса тăраймасть, кулма пуçлать.

Жеан. Апла эсĕ хăв та кулатăн пулсассăн ĕçĕ ытла начарах мар. Анчах пурпĕрех çав тип, ман шутпа, лайăх çынах мар. Ирхине эпир ăна ĕнентĕмĕр, вăл пирĕн юлташ пулса тăчĕ. Халĕ акă куратăп — ун пеккине вĕрентсе илмеллех пирĕн. Пĕлсе тăтăр, уншăн пачах та ырă ĕç тума юрамасть.

Робин. Халĕ эпĕ пушшех нимĕн те ăнланмастăп. Мĕншĕн пирĕн унпа вăрçăнмалла-ха?

Жеан. Çавăншăн. Каллех ăнланмастăн-и?.. Ĕнтнĕ сысна тирĕ тĕслĕскер илемлĕ машинине кĕрсе ларса пирĕн çинелле мăн кăмăллăн пăхтăрах. Ку — унăн ĕçĕ. Анчах унăн ӳчĕ пирĕнни пекех-çке. Çав çын пирĕнпе çакăн пек хăтланнинe каçарма юрамасть!

Бирон. Тĕрĕссине калатăн. Апла хирĕçле вăрçă пуçлар.

Жеан. Çапла, хирĕçӳ!.. Ăçта çухалчĕ-ха вăл?

Робин. Япалисене машинăра хăварнăскер хăна çуртĕнче ĕнтĕ.

Жеан *(тимлесе)*. Хăварнă... тетĕн-и? *(Машина патне пырса пăхать.)* Тĕрĕс калатăн... Робин, кала-ха, эсĕ унта пăртманетпа сумка выртнине куратăн-и?

Робин. Çапла. Мĕнех вара?

Жеан. Пирĕн тус алăкне питĕрмен тĕк эпир хирĕç тăрăва халех пуçлама пултаратпăр.

Бирон. Тĕрĕс. Айтăр ун япалисене çаклатса каятпăр. Тен, хăй машинине сыхлакана кăштах хисеплеме вĕренĕ.

Робин *(çирĕппĕн)*. Çук. Туссем, машинăна тĕкĕнер мар. Апла хăтланма никамăн та ирĕк çук. Вăл мăн кăмăлланать пулсан та унăн япалисене тивме юрамасть.

Бирон. Ку паллă ĕнтĕ... Вăрантăн апла? Эпĕ çакна кăна, пирĕн тĕрĕслĕхе юратакан вăранасса, кĕтнĕччĕ те. Сана çав тип кӳрентерчĕ-и, çук-и?

Жеан. Кам-ха тин кăна ун пирки хурласа каларĕ?

**Робин.** Эпӗ, эпӗ! Анчах пурпӗрех сирӗнтен нихӑшӗ те ку машина алӑкне уҫаймӗ, унти пӗр япалана та тӗкӗнеймӗ!

**Бирон.** Алӑкне питӗрнӗ пулас. Унсӑрӑн эсӗ кун пек хӑюлланман пулӑттӑн.

**Жеан** *(Бирон патнелле ҫаврӑнса).* Ӑнланмастӑп, мӗн итлесе тӑратӑн ӑна? Вӑл мӗн каланине илтрӗн-и? Хӑй инкекре пулнипе пире пулӑшма чӗнчӗ, халь эпирех вӑрӑхурах иккен.

**Робин.** Никам та чӗнмен сире. Хӑвӑр чупса килсе: «Мӗн пулчӗ? Мӗн пулчӗ?!» — тесе ҫухӑрма пуҫларӑр.

**Бирон.** Кала-ха, эпир машина алӑкне уҫсан эсӗ мӗн тунӑ пулӑттӑн?

**Жеан.** Е унти япаласене илес тесе кантӑкне ҫӗмӗрсен?

**Робин.** Апла хӑтланаймӑр. Вӑрласан тӗрмене ҫаклanасса пӗлетӗр.

**Бирон.** Эсӗ, паллах, хӑвӑрт чупса кайса пирӗн ҫинчен евитлӗттӗн. Эпир сана, сутӑнчӑка, питӗ аван пӗлсе ҫитнӗ!

**Робин.** Мана хуть мӗнле, хуть те мӗн чухлӗ усал сӑмах калӑр, анчах ҫакна пӗлӗр — машинӑна эпӗ сыхланӑ чух унтан пӗр япала та ҫухалмӗ.

**Жеан.** Курӑпӑр. Кил-ха, Бирон, кӑтарт-ха ӑна, илме пултараятпӑр-и, ҫук-и? Эс халех хӑвах курӑн. Ак сана! *(Робина хыттӑн ҫупса ярать.)*

**Робин Жеана хирӗҫ тӑрать, шӗвӗр пӳрнипе ун куҫӗ патӗнчен тӑрантарать.**

**Жеан.** Ай!

**Бирон.** Ан айлат! Малтан хӑв пуҫларӑн!

**Бирон сиксе ӳксе Робина чышкӑлама пуҫлать. Унтан Жеанпа иккӗшӗ ӑна ҫӗре ӳкереҫҫӗ. Бирон Робин ҫине хӑпарса ларать. Робин вӗҫерӗнесшӗн, анчах лешӗ ҫирӗп ларать.**

**Бирон.** Халех сан ҫӑварна тусан тултаратӑп та ун чух мӗнле тавлашмаллине пӗлӗн.

**Робин.** Пулӑшӑр! Пулӑшӑр!



Сувенир сутакансем чӳречисене уҫаҫҫӗ. Харкашу-ҫапӑҫӑва сӑнана май килаҫҫӗ.

1-мӗш сутуҫӑ. Ха-ха-ха! Вӗсен туслӑхӗ нумайлӑха пымасть тесе каларӑм вӗт. Ҫапӑҫмасӑр пурӑнаймаҫҫӗ...

2-мӗш сутуҫӑ. Хе-хе-хе! Мӗнлерех тӳнккеҫҫӗ пӗрпӗрне!

1-мӗш сутуҫӑ. Ак мӗн калам: хӑвах куратӑн, вӗсен чи юратнӑ ӗҫӗ — ҫапӑҫасси!

Сутуҫӑсем чӳречисене хупаҫҫӗ. Жеан аллине чул тытать.

Робин. Пулӑшӑр! *(Жеана.)* Чун илли! Вӑрӑ! Ил, эппин, унта мӗн пуррине йӑлтах! Илех тӗрмене лекессӳ килет пулсан. Анчах кантӑкне ан ҫӗмӗр, машинӑна питӗрмен!

Бирон. Мӗн? *(Робина тытса тӑнӑ ҫӗртен манса кайса вӗҫертет, сиксе тӑрать.)* Алӑкӗ уҫӑ-и? *(Кнопкӑна пусса пӑхать, ӗненет.)*

Робин *(тӑрать, пулӑшма чӗнсе)*. Пулӑшӑр!

Никам та пулӑшма килекен ҫук. Жеан пырать те машина алӑкӗн пӗчӗк чӳречине уҫать, аллине чикет. Ларкӑч ҫинче выртакан пӑртманет тӳрех куҫран ҫухалать. Робин, алӑка уҫтарас мар тесе тӑрмашаканскер, ҫакна асӑрхаймасть. Жеан ҫӑмӑллӑнах каялла сиккелесе чакать, аллине кӗнӗ япалана кӗсйине чиксе хурать.

Робин *(машина алӑкӗн пӗчӗк чӳречине хупса)*. Ну, мӗншӗн эсӗ нимӗн те илмерӗн-ха? Шикленетӗн-и?.. Тӗрмене хупасран хӑрарӑн-и?

Жеан. Манӑн темле пулсан та машина алӑкӗн пӗчӗк чӳречине ҫеҫ уҫса пӑхас килчӗ. Илес килнӗ тӗк унта мӗн пуррине веҫех илӗттӗм. Хӑвах куртӑн, эпӗ — вӑрӑ мар. Эсӗ хӑвӑн лайӑх хуҫун машинине сыхлатӑн-ҫке. Пирӗн мӗншӗн кансӗрлемелле-ха сана? Анчах асра тыт, тӑм писмен: машинӑран мӗн те пулин ҫухалсан эсӗ айӑплӑ пулатӑн! Ун чух сана хӑвна тӗрмене хупаҫҫӗ!

Б и р о н. Чăнах, Робин. Сана тĕрмене хупсан пирĕн питех кулянмалла пулать.

Ж е а н. Санăн аннŭне: «Робин пĕр патронăн машинине хуралланă чухне унти мĕнпур япалана вăрлаттарса тĕрмене çакланнă», — тесе пĕлтерĕпĕр.

Б и р о н. Аннŭ тŭрех ŭлесе ĕсĕклеме пуçлĕ... Çак илемлĕ машина хуçи патне килсе хăйĕн юратнă ывăлне, хаклăран та хаклă пĕчĕк Робина, ирĕке кăларма ыйтĕ вăл.

Робин тумтирĕ çинчи тусана силлет, питне сăтăркалать.

Ж е а н. Ырă патрон вара çапла калĕ *(сассине улăштарса)*: «Мĕншĕн килнĕ-ха ман пата ку çĕтĕк-çурăк тăхăннă карчăк? Вăл хăй ывăлне ирĕке кăларасшăн пулсан ăна вăрлама пăрахтартăр... Тасал кунтан, лăпăс-лапăс хĕрарăм, унсăрăн ман сыхлавçăсем сана вакласа тăкĕç!»

Б и р о н *(сассине улăштарса)*. «Тивĕçлĕ господин! Çуралнăранпа Робин мĕн чуль нуша тŭснине ăçтан пĕлен-ха эсĕ? Ăна тĕрмере хăварса, тен, тĕрĕс тăватăн... Сана мĕнпе тав тумаллине те пĕлместĕп. Эсĕ ăна тивĕçлипе айăпла та яланлăхах тĕрмене хупса ларт!»

Ж е а н. Çапла вара сана суд тăвĕç...

Б и р о н. Çапла вара эсĕ ĕмĕрлĕхех тĕрмере юлăн.

Ж е а н. Тĕрмерех вилĕн!

Б и р о н. Пытарасса та сана тĕрмерех пытарĕç.

Ж е а н. Сан ŭтŭ те тĕрмерех çĕрĕ.

Жеанпа Бирон аллисене аякĕсене тытса кăмăлтан ахăлтатаççĕ.

Ж е а н *(кайнă май)*. Юлах кунта! Юлах! Санпа малашне мĕн пуласси паллă ĕнтĕ!..

Б и р о н *(кайнă май)*. Эсĕ хăвна пирĕнтен лайăхрах пек тыткалаттăн, халь вара пуринчен те начарри пулатăн!.. Ха-ха-ха!..

Çутă сŭнет.

## Виççӗмӗш курăну

Робин патне хăна çуртӗнчен тухнă Эмиль таврăнать.

**Робин.** Çак машинăран мӗн те пулин çухалсан мана чăнах тӗрмене хупаççӗ-и, патрон?

**Эмиль** *(машинине пăхкаласа)*. Паллах, мӗн те пулин çухалсан... Çапла, сана тӗрмене хупаççӗ. Эсӗ хуралçă вӗт.

**Робин.** Çук, мсье, çук! Вӗсем калани тӗрӗс мар. Эсӗ те тӗрӗссине каласшăн мар, суятăн. Эпӗ ним те çаратман-çке, эпӗ вăрă мар... Çук! Чăнах та, эпӗ вăрă мар! Вӗсем калани — суя! Эпӗ вăрă мар, ман тӗрмере ларас килмест. Çук, çук! Ан тивӗр мана, патрон!

**Эмиль** *(итлесе, Робина лăплантарса)*. Итле-ха, Робин, ан пăлхан... Лăплан, йăлтах йӗркеллӗ, машинăран нимӗн те çухалман. Кур, пурте хăй вырăнӗнче. Мӗнле пулнă, çапла. Кур-ха!

Робин пăхса çаврăнать. Эмиль çӗр франк кăларать те Робина парать.

**Эмиль.** Эсӗ тӳрӗ чунлă, Робин. Мана килӗшетӗн. Çитет, лăплан та урăх ан хурлан. Хăвах куратăн, ним те çухалман. Никам та тӗрмене хупмасть сана. Тавах машинăна сыхланăшăн. Ним те пулман... Мотор та ав унччен хи пекех кӗрлет! Вăл та сана: «Йăлтах йӗркеллӗ!» — тесшӗн... Сывă пул, Робин! Тепре куриччен!

Çутă сӳнет.

Сцена умӗ.

Çуталсан Робин пӗчченех.

**Робин.** Çӗр питне çупăрлакан илемлӗ çеçкене курсан тал пиçен йӗппи çинчен манатăн. Çынсемпе те çавăн пекех: пӗрин ыр кăмăллăхӗ теприн усаллăхӗ çинчен мантарать. Этем йывăрлăха лексен кăна ун чунне кӗрсе курма çăмăл. Чухăншăн кӗпи хаклăран та хаклă, таса туйăм вăрттăнлăхне упрать. Хăйне кăна юратакана тутăлăх тӗп



тăвать. Хĕвел пуян та ырă. Пĕлĕт те çавах. Анчах темшĕн çынсем вĕсенчен тĕслĕх илмеççĕ. Пепке кăна хăйĕн çутă куçĕпе урăххин хуйхи-суйхине ăнланать. Пурнăçри йывăрлăха тепринпе çурмалла пайлама хатĕр, хăйĕн чĕрĕ, телейлĕ куллине те парнелеме хĕрхенмест вăл...

Çутă сӳнет.

## Тăваттăмĕш курăну

### Телей алăкĕ уçăлни

*(Тĕлĕк)*

Кивĕ патефон сасси — ташă кĕвви. Робин пуçне чиксе тăрать. Ун умĕнче пичĕсене тĕтĕм-хăрăмпа вараланă çынсем тăраççĕ. Хăйсем хаваслă уяври пекех ахăлтатса кулаççĕ. Вата та шурă çӳçлĕ негр, Старик, çӳллĕ вырăнта тăраканскер, сăмах хушать. Кĕвĕ чарăнать.

Старик *(Робина асăрхаса)*. Эсĕ мĕншĕн иртместĕн? Мĕнрен хăратăн? Кур, авă мĕн чухлĕ юлташ санăн! Вĕсем пурте кунта.

Робин асăрханса, куçне курăнман кавире варалас мар тенĕн, малалла утать. Сасартăк ун çулне тĕтре хуплать. Çакна пăхмасăрах арçын ача малалла талпăнать.

Старик. Мĕскер эс, Робин?! Хăвăртрах ут. Кĕтме вăхăтăм сахал! Е пирĕнпе калаçса чунна уçас теместĕн-и эсĕ? Курăр-ха ăна, ачасем! Вăл хăй тăванне кăштах укçа пама та хĕрхенет. Куратăр-и? Пĕр-пĕр пуян ăна тин çеç наркăмăш ĕçтернĕ тейĕн: тайкаланать вăл... Кур-ха, Робин! Нивушлĕ асăрхамастăн, сан çинче те пирĕнни пекех çĕтĕк-çурăк! Айван! Курăр-ха ăна! Тăр кăнтăрлах пуясси пирки тĕлленет... ĕмĕтленет вăл... пирĕн пек. Ха-ха-ха, ха-ха!

Пурте кулаççĕ.

Робин *(утма чарăнса)*. Пĕлетĕп эпĕ ăна. Вăл ман атте вĕт... Çавна та паллатăп!.. Эпĕ ăна таçта курнă, анчах ăçта?

Астумастăп... Ну, паллах, ку вăл лапамра хаçат сутакан Эзеб! Ав лере иккĕн...

Старик. Тĕрĕс, Робин! Эсĕ вĕсене палласса тем пекех шанса тăтăм эпĕ. Халĕ ĕнтĕ мĕн хытса тăратăн? Пайла!

Робин. Анчах вĕсем мана хĕнесе пĕтерчĕç! Тĕрмепе хăратрĕç! Вĕсем мана çак укçана ĕçлесе илме те пулăшмарĕç. Чăрмантарчĕç кăна! Вĕсем...

Старик. Пайла! Кунта йĕрки çапла: телее ыттисемпе пайламалла.

Çутă сӳнет.

## Пиллĕкмĕш курăну

Çуталсан — тĕлĕрекен Робин куçне уçса пăхать. Ун умĕнче Жеан-па Бирон тăраççĕ.

Робин. Юрать, эпĕ пайлатăп. Кашниех хăйĕн пайне илĕ, телейлĕ пулĕ.

Жеан. Робин, эсĕ халĕ те çилленетĕн-и?

Бирон. Çилленнĕ тени вырăнлă мар кунта. Куратăн-и, еплерех пăхать вăл? Пире каллех вăрçăнма килнĕ тесе шутлать ахăртнех.

Жеан. Мĕн вăрçмалли? Унăн машини те çук вĕт кунта халь.

Робин. Хуть мĕнле пулсан та сире лăплантарма пултаратăп: манăн йăлтах йĕркеллĕ. Мана никам та тĕрмене хуптармасть. Машина хуçи: «Нимĕн те çухалман», — терĕ.

Жеанпа Бирон ахăлтатаççĕ.

Жеан. Ку вăл ахальтен çеç, Робин. Каяр укçа пайлама. Эсĕ мĕн чухлĕ ĕçлесе илтĕн?

Робин. Виç çĕр франк.

Жеан. Виç çĕр франк?

Бирон. Мĕн чуль, мĕн чуль? Эсĕ пурĕ те виç çĕр франк кăна ĕçлесе илтĕн-и?

Робин. Ытти чух вара пирĕн унтан та ытларах пухăнатчĕ-и-ха?.. Эсир мĕншĕн мана темле шанмасăр пăхатăр?

Бирон. Апла паян эсӗ кунӗпе юлташун машинине лайăх сыхласа та виç çӗр франк çеç ӗçлесе илме пултартăн-и?

Жеан. Çавăнпа эсӗ укçана пӗр пек валеçесшӗн... Хăв сахал ӗçлесех пирӗнпе пӗр пек илесшӗн...

Робин. Анчах...

Жеан. Мӗнле анчах? Эпӗ пин те пилӗк çӗр франк ӗçлесе илтӗм.

Робин. Мӗскер? Пин те пилӗк çӗр?

Бирон. Эпӗ вара пин те улт çӗр франк!

Робин. Мӗнле майпа?! *(Хăй илтнине ӗненмесӗр.)* Тем пăтраштаратăр пулас?! Эсир, тен, çӗр аллă е çӗр утмăл франк тесе каласшăн пулӗ? Е ахальтен çеç мана култарма тăрăшатăр-и?

Бирон. Куратăн-и, Жеан?! Вăл, çитменнине, сана та, мана та шӳтсӗсем вырăнне хурать. Ӗненесшӗн мар. Хамăрăн ӗç укçине сана кăтартмалла-и е çук-и? Акă эппин, кур! Ху шутла. Шутла.

Робин малтан Биронăн, унтан Жеанăн укçине шутласа пăхать.

Робин. Мӗнле-ха çавăн чул ӗçлесе илме пултартăр эсир?

Жеан. Мӗнле? Эсӗ ăнланмастăн-и? Ку вăл питех те ансат: эсӗ хăвăн машину патӗнче харлаттарса хуп турттарнă чух эпир ӗçлерӗмӗр, чупкаларăмăр, тăрăшрăмăр, вăй хутăмăр.

Бирон. Куратăн-и? Анчах пирӗн ырă кăмăла ан ман. Эсӗ çакна тивӗçех мар пулин те, укçана эпир санпа пайлама килӗшетпӗр.

Робин. Эсир шутланă пекех эпӗ тивӗçлӗ пулмасан мана сирӗн укçăр кирлӗ мар.

Бирон. Каллех пирӗн мсье юнтарасшăн.

Жеан. Акă мӗн, Робин. Эсӗ яланхи пекех хăвăн укçуна пирӗнпе пайлатăн, унсăрăн...

Робин. Апла пулсан ман пирки ёçлемен, тивёç мар тесе ан калăр.

Бирон *(Робин умне чĕркуçленсе)*. Эпир санран питĕ пысăк каçару ыйтатпăр. О, аслă Робин! Мĕнпур кӳрентерните, усал сăмах каланине — йăлтах каçар. Эпĕ, санăн тусу Бирон, чăннипех калатăп, урăх ун пекки пулмĕ. Эсĕ ĕненетĕн-и?

Жеан *(хыттăн кулса)*. Итлĕр-ха, туссем, васкамалла. Курăр-ха, часах хĕвел анса ларать, тĕттĕмленет!

Бирон. Васкамалла. Пин те пилĕк çĕр тата пин те улт çĕр франк, ку пулать... ку пулать...

Жеан. Ку пулать, ку пулать... Çакăн пек пысăк укçана ăсра хушса шутласшăн-и эсĕ? Кун пекех шутла, хăвăртрах пулать.

Бирон *(укçа шутласа)*. Виçĕ пин те çĕр франк... Робин, тата санăн виç çĕр франкна хушатпăр.

Робин. Ку виçĕ пин те тăват çĕр франк пулать. Тĕрĕс-и?

Бирон. Тĕрĕс.

Жеан. Халĕ эпĕ, çавăн чул ёçлесе илнĕскер, чи малтан хама валли пилĕк çĕр франк илетĕп.

Робин. Паллах.

Бирон. Эпĕ те нумай ёçленĕ. Ман мĕн чухлĕ илес?

Жеан. Тăват çĕр франк, Бирон. Ытлашши ан ил.

Бирон. Аван. Акă ман алăра тăват çĕр франк. Илтĕм.

Жеан. Эсĕ те Робин, çĕр франк ил.

Бирон. Илех. Эсĕ те ёçленĕ вĕт. Пирĕн пек нумаях мар, паллах, анчах... илех çĕр франк.

Робин. Илтĕм.

Жеан. Юрать. Халĕ пĕр пек пайлама пуçлатпăр. Мĕн чуль юлчĕ? Робин, шутла!

Робин. Юлнă... Юлнă... Шăп та лăп. Икĕ пин те тăват çĕр франк.

Жеан. Ыран тата нумайрах ёçлесе илĕпĕр...

Çутă сӳнет.

## Улттăмĕш курăну

Сутă Робин çине кăна ӳкет.

**Робин.** Тата нумайрах ĕçлесе илĕпĕр? Ун пек ĕçлесси пулĕ-ши? Ман кĕсьере халĕ тăхăр çĕр франк. Ку ытти кунхинчен икĕ хут нумайрах. Мĕн чухлĕ укçа!.. Мĕнле майпа вĕсем ун чухлĕ ĕçленĕ-ха?.. Э-э-э, тепĕр тесен... Мана пурпĕрех мар-и?.. Çакăн пек уйăрни лайăх çапах. Халĕ ĕнтĕ туфли илме те пулать. Ыранах туянатăп.

Сутă сӳнет.

## Çиччĕмĕш курăну

Çуталсан — тепĕр кунхине. Машина килсе чарăнать. Ун хуçи Эмиль тĕлĕнмелле аппарат йăтса хăна çуртне кĕрсе каять. Ачасем пĕрле пухăнаççĕ.

**Жеан.** Пĕр-пĕр ăрăмçă мар-ши вăл?

**Бирон.** Тен, ырă куç пăвакан?! Ун пекки çинчен хăçан та пулин илтнĕ-и?

**Жеан.** Ырă куç пăвакан? Ун пирки... Çук! Ку вĕт пĕрмай чĕмсĕр, çитменнине, хура ӳтлĕ, ман пекех!

**Бирон.** Нивушлĕ эсĕ вăл ăçта пурăннине курмастăн, мĕнле тумланнине асăрхамастăн, мĕнлерех машина пуррине пĕлместĕн? Пĕтĕмпех шурă ӳтлĕ çыннăнни пекех. Ак халь тата унăн аппарачĕ... Кун пеккине эсĕ хăçан та пулсан курнă-и?

**Жеан.** Çук. Пĕрремĕш хут.

**Робин.** Эпĕ те курман. Асамлă япала пулĕ вăл.

Хăна çуртĕнчен Эмиль савăнăçлăн тухать. Аллинче — пакет, ăна вăл тин кăна почтăпа илнĕ пулас.

**Эмиль.** Арçын ачасем! Ман сире валли сюрприз пур! Кунтах пулăр, таçта ан кайăр. Эпĕ часах килетĕп. *(Хăна çуртне кĕрет те часах каялла тухать.)* Эпĕ сире пĕр



пӳлёме кёме ыйтататăп. Пуçлăхпа кун пирки чиперех калаçса татăлтăм.

Çутă сӳнет.

## Саккăрмёш курăну

Çуталсан — хăна çуртĕнчи пĕрремĕш хутри пĕчĕк пӳлĕм. Эмиль пӳлĕмĕн пĕр енче пысăках мар шурă экран вырнаçтарать. Ачасемпе сутуçăсем кĕреççĕ.

Эмиль *(хушса)*. Чӳречене карăр! Алăка лайăх хупăр!

Ачасем мĕн хушнине пурнăçлаççĕ.

Эмиль. Халĕ, туссем, эпир кăштах савăнса илĕпĕр.

Çутă сӳнет — шурă экран çуталать. Куç умне пушмак тасатакан ачасен хули тухса тăрать.

1-мĕш сутуçă. Ак! Палласа илтĕм: ку — пирĕн хула!

2-мĕш сутуçă. Çынсемпе машинăсем пурнăçринчен хăвăртрах çӳреççĕ пулин те, кур-ха, пушмак тасатакан ачасен пĕчĕк пĕвĕсене пысăк çынсем хушшинче палласа илме пулать! Авă вĕсем!

1-мĕш сутуçă. Куратăп çав!.. Кино вăл — ырă япалах мар.

2-мĕш сутуçă. Ан та кала! Вăл тем те кăтартать... Тепĕр чух кăтартма кирлĕ маррине те.

Бирон. Кур-ха, Робин, кур! Эсĕ вĕт ку!

Робин. Çапла, эпĕ. Акă эсир, манпа иккĕн тан хĕрсех çапăçасшăн.

Жеан. О, шеф! Çук, çук! Кирлĕ мар ку тытăçăва кăтартма. Кирлĕ мар!..

1-мĕш сутуçă. Мĕншĕн?

Жеан. Ан кăтарт малалла, патрон!

Эмиль. Шăплан... Мĕн пулнине курса пĕтерме пар.

1-мĕш сутуçă. Малалла мĕн пулассине лайăх пĕлетĕр ĕнтĕ эсир.

2-мĕш сутуçă. Ку аппарат ĕçлессе аван ĕçлет...

Экран çине тепĕр сцена тухать: Жеан пăртманета вăрлани.

Жеан *(çухăрса)*. Ой! Ой-ой! *(Алăк патнелле вĕçтерет.)*

Анчах Жеана сутуçăсем тытса чараççĕ.

Робин. О-о! Турăçăм! Ав мĕншĕн вĕсем ун чух çавăн пек нумай укçа ĕçлесе илнĕ. Çав вăрланă нухрата вĕсем манпа ним пулман пекех пайларĕç! Эпĕ унпа çĕнĕ туфли туянтăм вĕт! Халĕ çавăншăн манăн та вĕсемпе пĕрле тĕрмере лармалла-и? Патрон, эсĕ куртăн вĕт, куртăнçке! Эпĕ вĕт... Нимĕнпе те айăплă мар! Акă вăл туфли! *(Уринчи мăшăр пушмакне хывать.)* Акă илсем!.. Сан укçупа туяннăскер!.. Шеф, анчах манăн пĕрре те тĕрмене каяс килмест. Манăн атте суккăр... Анне те ĕçлеймест... Патрон, ман тĕрмене каяс килмест! Чăнах та... Çук, каяс килмест! *(Макăрать.)*

1-мĕш сутуçă *(кăмăллăн)*. Тинех çаклантăр-и?

2-мĕш сутуçă. Халĕ ĕнтĕ вĕсене кайса хупаççех. Тинех пире пĕр кансĕрлекен те пулмĕ.

1-мĕш сутуçă. Ĕнтĕ лăпкă пурнăç пуçланать...

2-мĕш сутуçă. Пуçланĕ-ши?.. Кусене хупсан вĕсен вырăнне хулара урăх çапкаланчăксем тупăнаççех.

1-мĕш сутуçă. Кусене тĕрмене хупсан...

Арçын ачасем макăраççĕ.

Эмиль *(лăпкăн)*. Илех каялла хăвăн мăшăр туфлине, тусăм. Вăл санăн. Эсĕ ăна тăхăнма тивĕçлĕ... Нимĕнле тĕрмене те хупмĕç сана.

1-мĕш сутуçă *(шăппăн)*. Мĕнле-ха капла?

2-мĕш сутуçă. Тем те курăн... Анчах леш иккĕшне тыттарса ямаллах...

Эмиль *(Жеанпа Бирон патне пырса, васкамасăр, çирĕппĕн)*. Сирĕнтен нихăшĕ те тĕрмене лекмĕ! Илтетĕр-и?

Эпӗ тепӗр хут калатӑп, сирӗнтен нихӑшӗ те ниҫта та каймасть. Эсир пулман пулсан эпӗ нихӑҫан та ҫакӑн пек чаплӑ сыпӑка ӳкереймен пулӑттӑм.

Ҫутӑ сӳнет.

Сцена умӗ.

Сцена ҫуталсан — унта темӗн тӗрлӗ пысӑк щетка. Вӗсемпе пӗрлех темиҫе пӗчӗк ура куратпӑр. Кашни ура хӑйӗн пушмакне тасаттарасшӑн...

1-мӗш ура. Мсье Щетка, тасатсам пушмакӑма!..
2-мӗш ура. Мсье, тасатсам, тархасшӑн...

Щеткӑсем илтмӗш пулса кӗрсе каяҫҫӗ.

3-мӗш ура. Мсье, тархасшӑн...

Ҫутӑ сӳнет.

ЧАРШАВ



50,00

Литературно-художественное издание

*Для детей среднего школьного возраста*

**Кириллов Геннадий Васильевич**

**ПУШМАК ТАСАТАКАН**
**ВИҪĔ АРҪЫН АЧА**

**ТРИ ЮНЫХ ЧИСТИЛЬЩИКА**

**Пьеса**

*На чувашском языке*

Редактор *О.М. Иванова*
Художник *И.В. Алексеев*
Художественный редактор *А.Г. Сушкова*
Технический редактор *Л.К. Егорова*
Корректор *Е.П. Казакова*
Компьютерная верстка *Я.О. Чиженковой*

12+ Информаци продукцийĕн палли (436 № ФЗ. 29.12.2010).
Знак информационной продукции согласно ФЗ от 29.12.2010 г. № 436-ФЗ.

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003. Подписано к печати 08.05.14. Формат 70×90 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 3,51. Тираж 1000 экз. Заказ № 641. Изд. № 102.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство»
Мининформполитики Чувашии, 428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в ООО «Чебоксарская типография № 1»,
428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 15.

ISBN 978-5-7670-2257-1

Чăваш кĕнеке издательстви